27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ДЕКАБРЬ
30
ШАМАТКУН
255(6750) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

МТС-сен ПĔТĔМ СОЮЗРИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВĔ

Çĕршывăн социализмлă промышленноçĕ стахановла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче колхозлă ялхуçалăхне çĕршер пин тракторсемпе комбайнсем тата ытти машинăсем парса хăтланшаллантарчĕ. Пирĕн çĕршывăн ял хуçалăхĕ механизациленĕ шултăра ялхуçалăхĕ пулса тăчĕ. Хамăрăн материалсенчен хамăрăн рабочисем туса панă машинăсемпе ĕçлесе, колхозсемпе совхозсем çулсеренех вăйлă тырпул туса илеççĕ. Тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çара çителĕклĕ таранах апатçимĕç, промышленноçа чĕртавар парса тăраççĕ. Пирĕн республикăра кăна иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче 1120 трактор, 360 комбайн ĕçленĕ. Вĕсем 349.195 гектар çĕр сухаланă, 29.819 гектар тыррине вырса çапнă. Çак ĕçсене туса, МТС-сем колхозсене мĕн тери пысăк пулăшу панине ăнланса илме йывăрах мар: иртнĕ çулта тракторсемпе сухаланă çĕре лашасемпе сухалас пулсан тата комбайнсемпе вырнă тырра алăпа вырас пулсан, пире, хальхи лашасемсĕр пуçне, татах вуншар пин лаша кирлĕ пулнă пулĕччĕ, колхозниксен вара темиçе хут ытларах ĕçлемелле пулнă пулĕччĕ.

Çакăнтан ĕнтĕ тракторсемпе комбайнсем пирĕн ялхуçалăхĕнче калама çук пысăк вырăн йышăнни аванах курăнса тăрать. Тĕрĕсрех каласан, уйхир ĕçĕсен ăнăçлăхне чылай колхозсенче тата чылай ĕçре пĕтĕмĕшпех МТС-сем татса параççĕ, колхозсем вăйлă тырпул туса илесси чылай чухне МТС-сенчен килет. Апла мĕншĕн ĕнтĕ тракторсемпе комбайнсене тата ытти машинăсене çитес çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене тума вăхăтра та тĕплĕн хатĕрлесе çитересси пирĕн хальхи чи пысăк задачăсенчен пĕри пулса тăрать.

Республикăри хаçатсен иртнĕ номерĕсенче эпир Украина ССР-ĕнчи Сталино облаçĕнчи Старо-Бешевски МТС трактористчĕсем, рабочийĕсемпе служащийĕсем Совет Союзĕнчи МТС-семпе МТМ-сен тата ремонт завочĕсен мĕнпур работникĕсене тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ĕçре Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилеме чĕнсе каланине пичетлесе кăлартăмăр. Пирĕн республикăри Шăхасан МТС-ĕн коллективĕ те 1945 çулта лайăхрах ĕçлеме, тракторсемпе комбайнсене тата ытти машинăсене вăхăтра, тĕплĕн юсаса хатĕрлеме пулса обязательствăсем илчĕ, республикăри ытти МТС-сене çак тĕлĕшпе ăмăртăва тухма чĕнсе каларĕ.

Украина ССР-ĕнчи Старо-Бешевски МТС работникĕсемпе пирĕн республикăри Шăхасан МТС коллективĕн пуçарăвĕ 1945 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн пыракан кĕрешÿре калама çук паха вырăн йышăнса тăрать. МТС-сем хушшинче халĕ пуçланса каякан социализмлă ăмăртăвăн пĕлтерĕшне тивĕçлипе хак пама та хĕн. Çак ăмăрту хумĕ мĕн чухлĕ анлăнрах сарăлса кайĕ, килес çулхи уйхир ĕçĕсенче пирĕн МТС-сем çавăн чухлĕ ăнăçлăрах ĕçлĕç. Паллах, вăл çапла пултăр тесен, çак ăмăртăва çине тăрса вăйлатса пыни, ăна партипе совет организацийĕсем организацилесе ертсе пыни, ăмăрту умĕнче тăракан задачăсене пĕтĕмĕшпех тата вăхăтра пурнăçласа пымалла туни кирлĕ.

Ăмăртăва пуçарса яракан Старо-Бешевски МТС коллективĕ татăклă та уçăмлă обязательствăсем илнĕ. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсамалли плана 1945 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне—правительство кăтартса панă срокран 1 уйăх та 20 кун малтан пурнăçа кĕртмелле. Комбайнсене килес çулхи майăн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр хатĕрлесе çитермелле. Машинăсемпе тракторсене юсанин хакне 10 процент чакармалла. Тракторсене, комбайнсене тата ытти ялхуçалăх машинисене хĕллехи вăхăтра кăтартуллăн сыхласа усрамалла, çак шутпа Ногински МТС примерĕпе анлăн усă курмалла. Трактор бригадисем валли инструментсемпе ытти ĕç хатĕрĕсене çителĕклĕ таранах хатĕрлесе хумалла, бригадăсем валли хирти стансем, куçса çÿрекен мастерскойсем тата нефть тавраше тытса усрамалли витнĕ лупассемпе сарайсем лартса памалла. Куçса çÿрекен мастерскойсем валли кирлĕ чухлех инструментсем тупса хатĕрлемелле. Трактористсен кадрĕсене çителĕклĕ таран вĕрентсе хатĕрлемелле. Лаша кÿлсе ĕçлемелли мĕнпур хатĕрсене—плугсене, сеялкăсене, культиваторсене—вăхăтра юсаса хатĕрлеме колхозсене пулăшмалла.

Çакăн пек ĕнтĕ, кĕскен каласан, Старо-Бешевски МТС работникĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсем. Пирĕн республикăри МТС-сем, çавăн пек обязательствăсем илсе, вĕсене пурнăçа кĕртме пултараççĕ-и-ха? Пĕр иккĕленсе тăмасăрах каламалла, çавăн пек обязательствăсене пурнăçа кĕртме республикăри кашни машинно-тракторнăй станцийĕнех çителĕклĕ чухлĕ майсемпе условисем пур. Апла пулсан, чи кирлĕ задача вăл—çав майсемпе тата условисемпе пĕтĕмĕшпех усă курасси, харпăрхăй МТС-ĕн резервĕсемпе ресурсĕсене палăртса, вĕсене пĕтĕмпех ĕçе ярасси пулса тăрать. Хăйсен мĕнпур майĕсемпе усă курса ĕçленĕ МТС-сем 1944 çулта тракторсемпе ĕçлемелли плана ытлашшипех тултарма пултарчĕç. Вĕсен шутне Вăрнар, Шăхасан, Красноармейски, Йĕпреç МТС-ĕсем кĕреççĕ. Сăмахран, Вăрнар МТС-ĕ Горький облаçĕнчи Каменка МТС-ĕпе ăмăртса ĕçлесе, тракторсемпе ĕçлемелли плана 130,5 процент тултарчĕ, 15 лаша вăйлĕ кашни трактор пуçне 480 гектар сухаларĕ. Çак ÿсĕмсем çăмăллăнах пулман. Иртнĕ çулта горючи енĕпе Вăрнар МТС-ĕн те пысăк йывăрлăхсем пулнă. Анчах вăл çав йывăрлăхсене çĕнтермелли майсене шыраса тупнă, газогенераторлă тракторсемпе туллинрех усă курнă, вĕсене валли чурка хатĕрлес ĕçе пĕлсе организациленĕ. Ĕçе пурнăçа кĕртме май çук пулсан, вăл мая тупас пулать!—çакăн пек малта пыракансен законĕ.

МТС-сен социализмлă ăмăртăвĕн çывăх вăхăтри тĕп задачи—тракторсемпе комбайнсене, кăкарса ĕçлемелли инвентарьсене вăхăтра тата лайăх юсаса хатĕрлесси пулса тăрать. Çак ĕç халĕ пирĕн МТС-сенче çителĕклĕ хăвăртлăхсемпе пырать тесе калама çук-ха. Йĕпреç, Шăхасан, Вăрнар, Елчĕк МТС-ĕсем кăна тракторсем юсамалли 4-мĕш кварталти плана ытлашшипех тултарнă. Красноармейски МТС-ĕ хăйĕн мĕнпур тракторĕсене юсаса пĕтернĕ. Анчах Улатăр, Етĕрне, Тăвай, Вăрмар, Куславкка, Пăрачкав, Кожевенски тата ытти хăшпĕр МТС-сем тракторсене юсаса хатĕрлес тĕлĕшпе тÿсме çук начар ĕçлеççĕ, вĕсем кварталти плана çуррине те тултарайман. Çак машинно-тракторнăй станцисем кăçал та иртнĕ çулхи йăнăшах тăваççĕ. Тĕслĕхрен, Етĕрне МТС-ĕ тракторсем юсамалли плана 14 процент ытларах кăна тултарнă. Иртнĕ çулта та вăл ремонт ĕçне çуракине тухиччен тăсса пычĕ, вара тракторсемпе ĕçлемелли плана тултараймарĕ. Çапах та кунта кăçал та аскамаççĕ-ха. Машинăсене юсама кирлĕ çĕнĕ запаслă пайсене тупма та тăрăшмаççĕ, киввисене юсас тĕлĕшпе те пуçарулăх кăтартса ĕçлени çук.

Калас пулать, МТС-сем валли çĕнĕ запаслă пайсем хатĕрлесе парас тĕлĕшпе республикăри промышленность предприятийĕсен те, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн те хăйсен ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла.

Тракторсене юсас ĕçре иртнĕ çулта пулнă тепĕр йăнăшран та сыхланас пулать. Хăшпĕр МТС-сем ун чухне юсав пахалăхĕ çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхрĕç. Çавăнпа та вĕсен хăшпĕр тракторĕсем сухаламалли участока çитиччен çĕмĕрĕлсе кайрĕç. Çакăн пек йăнăш килес çураки вăхăтĕнче ан пултăр тесен, юсаса кăларнă тракторăн кашни пайне тĕплĕн тĕрĕслес пулать, кашни трактора ĕçлесе пăхса тĕрĕслемелле тăвас пулать, юсав ĕçĕнче брак тăвакансене хирĕç кĕрешни, мастерскойсенче тивĕçлĕ йĕркелĕхпе дисциплина пулни кирлĕ. Çапла тусан кăна юсав пахалăхĕ лайăх пулассине шанма пулать.

Ремонт ĕçĕ йĕркеллĕн, кал-кал пулса пырасси график тăрăх ĕçленинчен килет. График—кашни трактористшăн, ремонт цехĕнчи кашни рабочишĕн, кашни бригадăшăн, кашни МТС-шăн çирĕп закон пулса тăмалла. Тракторсене юсас ĕçри Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва пуçарса яракансем мĕнпур тракторсене 1945 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерме сăмах параççĕ. Республикăри мĕнпур МТС-сен çак срок тĕлне тракторсене юсаса пĕтерессишĕн хĕрÿллĕ кĕрешĕве тухмалла. Ремонт ĕçĕнчи кашни рабочи ĕç нормине ытлашшипех тултарса, ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пымалла. МТС-сен директорĕсемпе парторганизацисен юсав ĕçне тĕрĕс организацилесе ертсе пымалла, мĕнпур трактористсене, комбайнерсене машинăсем юсанă çĕре явăçтармалла, вĕсене ĕçлеме тата пурăнма лайăх условисем туса памалла.

Старо-Бешевски тата Шăхасан МТС-ĕсем чĕнсе каланине халĕ республикăри машинно-тракторнăй станцисен работникĕсем анлăн сÿтсе яваççĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, конкретлăй обязательствăсем илеççĕ. Районсенчи партипе совет организацисен задачи — МТС-сен ăмăртăвне кашни МТС-па МТМ, кашни бригада, кашни трактористпа комбайнер хутшăнмалла тăвасси, вĕсем илнĕ обязательствăсене мĕнле пурнăçланине куллен тĕрĕслесе тăрасси тата вĕсене ĕçре пулăшасси пулса тăрать.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР-ĕнчи ĕççынни депутачĕсен район, хула, поселок тата ял Совечĕсен суйлавĕсене тепĕр вăхăта хăварасси çинчен

Вăрçă пынине пула, Чăваш АССР-ĕнчи ĕççынни депутачĕсен район, хула, поселок тата ял Совечĕсен суйлавĕсене 1945 çулхи декабрь уйăхĕччен хăварас тата вăл Советсен полномочине çав срокăхах тăсас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули. 1944 çулхи декабрĕн 27-мĕшĕ.

Харпăрхăй перекетлесе хăварнă тырра—Хĕрлĕ Çар фондне!

Ишлей районĕнчи «Верный путь» колхоз çулсеренех пысăк тухăçлă тырпул туса илет. Кăçал вăл кашни гектартан вăтам шутпа 100-шер пăт ытла пухса илнĕ. Çавăн пек пысăк тухăçлă тырпул туса илме агротехника кăтартăвĕсене тĕрĕс пурнăçласа пыни тата ĕçе тĕрĕс организацилени май панă.

«Верный путь» колхоз çитес çулта та вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе хĕрÿллĕн ĕçлеме тытăнчĕ. Вăрлăхсене çителĕклĕ таран сортласа хатĕрленĕ, вĕсем пурте кондицие лараççĕ. Хире кунсерен 25—30-шар лав ытла тислĕк кăлараççĕ. Кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Çак кунсенче кăна 35 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Ялхуçалăх машинисене те пĕтĕмпех юсаса пĕтернĕ.

«Верный путь» колхоз кăçал, государствăна мĕнпур парăмсене парса татса, Хĕрлĕ Çар фондне 400 пăт тырă, 600 пăт çĕрулмипе пахча-çимĕç пачĕ. Ĕçкунĕ тăрах 2,5 килограмм тĕштырă, 8 килограмм çĕрулми валеçнĕ.

Çак кунсенче ялхуçалăх çулне вĕçленĕ майпа пуху пулса иртрĕ. Пухура колхоз председателĕ Волков юлташ Хĕрлĕ Çар фондне тата 200 пăт тырă пама май пурри çинчен каласа пачĕ. Пухура пулнă колхозниксем çак сĕнĕве ырласа йышăнчĕç. Кунсăр пуçне, колхоз председателĕ, правлени членĕсемпе бригадирсем тата колхозниксем харпăрхăй запасĕнчен Хĕрлĕ Çар фондне пĕтĕмпе 400 пăт тырă пама пулчĕç. Çак тырра халĕ хатĕрлев пунктне леçеççĕ.

П. АРБАТОВ.

* * *

МУРКАШ, декабрĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Районри колхозниксемпе колхозницăсем Шупашкар тата Çĕрпÿ районĕсенчи колхозниксем чĕнсе каланине ырласа кĕтсе илчĕç. Енер çак ыйтупа районри коммунистсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура пулнă колхоз председателĕсем хăйсем перекетлесе пухнă тырра Хĕрлĕ Çар фондне пама килĕшни çинчен пĕрин хыççăн тепри тухса каларĕç. «Свобода» колхоз председателĕ Петровский юлташ, чи малтан тухса каласа, Хĕрлĕ Çар фондне 20 пăт тырă пама пулчĕ. Ун хыççăн «Авангард» колхоз председателĕ Кольцов 6 пăт, Буденный ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Оньков юлташ 9 пăт, Доронин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Краснова юлташ 6 пăт пама пулчĕç. Паян районри колхозсенче колхозниксен пухăвĕсем пулса иртеççĕ, унта Хĕрлĕ Çар фондне тырă парасси çинчен сÿтсе яваççĕ.

М. ТИТОВ.

* * *

ЕТĔРНЕ, декабрĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Шупашкăр тата Çĕрпÿ районĕсенчи колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне тырă пама йышăнни çинчен илтсенех, МТС-ри трактористсемпе трактористкăсен пухăвĕ пулса иртнĕ. Çак пухура трактористсем хăйсем ĕçлесе илнĕ тыррăн пĕр пайне Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăннă. Трактор бригадин бригадирĕ Скотников юлташ 4 пăт, учетчик В. Фисов—5 пăт, комбайнер Токсубаев юлташ 5 пăт, трактор бригадин бригадирĕ Калеошко юлташ 6 пăт пама пулнă. Çак пухура пулнă трактористсемпе трактористкăсем Хĕрлĕ Çар фондне 60 пăт ытла тырă пама пулнă.

* * *

КАЛИНИНО, декабрĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Çĕрпÿ районĕнчи колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне тырă парас тĕлĕшпе пуçласа янă паха пуçарăва районри колхозниксемпе колхозницăсем ырласа кĕтсе илчĕç. Кашни колхозрах колхозниксен пухăвĕсем пулса иртрĕç. «Коминтерн», «Броневик», Ленин, Киров, Чапаев ячĕсемпе тăракан колхозсем кашниех 360-шар пăт Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăнчĕç. Ана колхозниксем хăйсем перекетленĕ тырăран пухнă. Колхозсенчен пĕлтернĕ тăрăх Хĕрлĕ Çар фондне пурĕ районĕпе 7.000 пăт пама йышăннă. Вĕл шутран 5.000 пăтне хатĕрлев пунктне леçсе панă. Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăннă тырра государство складне паян-ыранах леçсе пĕтерегпĕр.

Т. ВАЛЕЕВ,
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Килес çулхи вăйлă тырпулшăн

ЕЛЧĔК. Тăрмăш ялсоветне кĕрекен колхозсем çуракине тивĕçлипе хатĕрленеççĕ. Ку ялсоветĕнчи «Красное знамя» колхозра вăрлăха сортласа пĕтернĕ. 15 плуг, 2 сеялка тата сÿресене юсаса хунă. Хире 700 лав тислĕк кăларнă.

Ку ялсоветĕнчи «Знамя» колхозпа «Новый путь» колхоз пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. «Знамя» колхозра вăрлăха сортласа хунă, ялхуçалăх машинисене йăлтах юсанă. Выранти удобренисем: кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухаççĕ. Халиччен хире 900 лав тислĕк кăларнă.

«Новый путь» колхоз та унтан юлмасть. Ку колхозра 20 плуг, 15 сÿре тата 2 сеялка юсанă. Халĕ вăрлăхлăх тырăсене сортлаççĕ, вырăнти удобренисем пухаççĕ.

Ялсоветĕнчи колхозсем кăçал тухăçлă тырпул туса илчĕç, килес çул тата тухăçлăрах тырпул туса илме хатĕрленеççĕ.

П. ЩЕРБАКОВ

А. С. ГРИБОЕДОВ ЯЧĔПЕ ПОЧТА МАРКИСЕМ КĂЛАРАÇÇĔ

А. С. Грибоедов çуралнăранпа 150 çул тултарнă тĕле СССР Çыхăну Халăх Комиссариачĕ аслă вырăс писателĕн ÿкерчĕклĕ почта маркисем кăларма хатĕрлет. Маркăн оригиналне И. Дубасов художник тăвать. Юбилей кунĕсем тĕлне маркăсене сутма пуçлаççĕ. (ТАСС).

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ декабрĕн 28-мĕшĕнче 23 сехет те 15 минутра Мускавра, йывăр чирлесе выртнă хыççăн, большевиксен партийĕн ватă членĕ, Совет Союзĕнчи ĕçхĕрарăмĕсен организаторĕ, ВКП(б) Центральный Комитечĕн членĕ, СССР Верховный Совет Президиумĕн членĕ—КЛАВДИЯ ИВАНОВНА НИКОЛАЕВА юлташ вилсе кайни çинчен партипе пĕтĕм ĕççыннисене хурланса пĕлтереççĕ.

ПЕТЕМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИЙЕН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

ССР СОЮЗЕН ХАЛАХ КОМИССАРЕСЕН СОВЕЧĔ.

СССР Верховный Совет Президиумĕнчен

СССР Верховный Совет Президиумĕ Совет государствин паллă деятелĕ, СССР Верховный Совет Президиумĕн членĕ КЛАВДИЯ ИВАНОВНА НИКОЛАЕВА юлташ вилни çинчен хурланса пĕлтерет.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔ.

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Советĕнчен

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ мĕнпур рабочисене, работницăсене, инженерсене, техниксене тата служащисене, профессиллĕ союзсен членĕсене пурне те 1944 çулхи декабрĕн 28-мĕшĕнче Мускавра, йывăр тата нумай вăхăт хушши чирлесе выртнă хыççăн, большевиксен партийĕн ватă членĕ, профдвиженин паллă деятелĕ, ВЦСПС секретарĕ—КЛАВДИЯ ИВАНОВНА НИКОЛАЕВА юлташ вилсе кайни çинчен хурланса пĕлтерет.

ПРОФЕССИЛЛЕ СОЮЗСЕН ПЕТЕМ СОЮЗРИ ЦЕНТРАЛЬНЫЙ СОВЕЧĔ.

П Ĕ Л Т Е Р Ÿ

К. И. НИКОЛАЕВА юлташа пытарма комисси организациленĕ. Комиссие çак юлташсем кĕреççĕ: Н. М. Шверник, В. В. Кузнецов, М. Ф. Шкирятов, Г. М. Попов тата Елена Гавриловна Шульга.

ВКП(б) Центральный Комитечĕн членне, СССР Верховный Совет Президиумĕн членне К. И. Николаева юлташа пытарма организациленĕ комиссирен

К. И. Николаева юлташăн тупăкне ГУМ çуртне (Хĕрлĕ площадь) лартнă.

Унпала сывпуллашма ГУМ çуртне (Хĕрлĕ площадь) декабрĕн 29-мĕшĕнче 6 сехетрен пуçласа каçхине 10 сехет çитиччен кĕрсе курма пулать.

Хăçан пытарасси çинчен уйрăммăн пĕлтереççĕ.

Час-часах тума кирлĕ ĕç

ТĂВАЙ. (Телефонпа). Колхозсенче лашасене мĕнле пăхнине, вĕсемпе мĕнле усă курнине тĕрĕслеме тата ут таврашĕсемпе кÿлмелли инвентарьсене сăнаса тăма районра ялан ĕçлекен икĕ комисси организациленĕ. Çак комиссисем малтанхи хут лашасене тĕрĕслесе тухрĕç. Районри 27 колхоз лашисене кăтартма илсе пычĕç, «Красное Сормово», «Звезда», «Первое мая», «Культура» тата Шмидт ячĕпе тăракан колхозсем пĕр сăлтавсăрах лашасене кăтартма илсе пымарĕç. Лашасене тĕрĕсленĕ хыççăн çакă курăнчĕ: мăнтăррисемпе лайăххисем нумайрах, анчах та 27 колхозри 85 лаша ытла та ырхан. 145 лашан çурăмĕсем çинче сурансем пур, чирлисемпе уксаххисем 40 лаша тупăнчĕç. Уйрăмăнах «8 марта», Мичурин, Чапаев ячĕпе тăракан колхозсенче лашасем вăйлă та мăнтăр, çак колхозсенче кÿлмелли хатĕрсем те лайăх, çунасем те йĕркеллĕ. «Горьковская Коммуна» тата «КИМ» колхозсенче хăмăтсем, йĕнерчĕксем тата тилхепесем ытла та начар, лашисем те ырхантарах.

Чирлĕ лашасене сыватас тĕлĕшпе комисси сроксем кăтартса хăварчĕ. Районри ветеринарсемпе зоотехниксене чирлĕ лашасене сыватас ĕçре колхозсене тивĕçлĕ пулăшу пама хушрĕ.

Яланлăх комисси ĕçĕнче малтанлăха уйрăм çитменлĕхсем пур пулсан та (ĕçе организованно ирттерменни, ăна вăрăма тăсни), çакăн хыççăн лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕç лайăхланасси аванах курăнать.

Зоотехник Т. СТЕПАНОВА.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 28-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 28-мĕшĕнче пирĕн çарсем ВЕНГРИРЕ, ДЬЕНДЬЕШ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, СЕЧЕНЬ хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата ШАЛГО, ЗАДЬВА РОНА, КАРАНЧАЛИА, ЕТТЕШ, НАДЬ-ГЕЦ, ГАРПИ ялĕсене йышăннă.

ЧЕХОСЛОВАКИРЕ пирĕн çарсем ШАХЫ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, сăртлă-вăрманлă вырăнти йывăр условисен че кĕрешсе, ТРУБУШОВЦЕ, ИНАМ, ДУРКОВЦЕ, ЧЕЛОВЦЕ, ОПОВА, ГРУШОВ, ФЕДИМЕШ ялĕсене туртса илнĕ. Çавăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн çарсем ШАХЫ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре вăйлă çапăçнă хыççăн тăшмантан ИПЕЛЬ шывĕпе ГРОН шывĕ хушшинчи вырăна тасатнă. ПАСТОВЦЕ, ДАРНОВКИ, ПАЛЦ, САЛКА, ЛЕЛЕД, ХАЛЕМБА, КИЧИНД, ГАРАМ КЕВЕШД ялĕсене тата ХАЛЕМБА, КОВАЧПАТАК чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ. Çапла вара, пирĕн çарсем ЛЕВИЦЕ хулинчен пуçласа ДУНАЙ шывĕ патне çитиччен выртакан районра ГРОН шывĕн хĕвелтухăç хĕррине пырса тухнă.

ДЬЕНДЬЕШ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри тата Шахы хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районсенче декабрĕн 27-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 2.200 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

БУДАПЕШТ хули районĕнче пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă. ДУНАЙ шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче БУДАПЕШТ хĕрринчи БУНАКЕСИ, АЛАГИВИЛПА, АРПАД, ЦИНКОТА, ПЕЦЕЛЬ, РАКОШЧАБА, РАКОШЛИГЕТ, РАКОШКЕРЕСФУР, ПЕШТСЕНТЛЕРИНЦ, ПЕШСЕНТЬИМРЕ, АНДРАШИ, ДИАЛ поселокĕсене йышăннă. Çавăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн çарсем тăшманăн БУДАПЕШТ хулинчен çурçĕртерехре, ДУНАЙ шывĕн кукринчи сăртлă-вăрманлă районра çавăрса илнĕ чаçĕсене пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă, ПИЛИШСЕНТКЕРЕСТ ялне туртса илнĕ. ПИЛИШСЕНТКЕРЕСТ ялне туртса илессишĕн пынă çапăçура венгер салтакĕсемпе офицерĕсен 600 çынтан тăракан ушкăнне тыткăна илнĕ, вăл шутра пĕр генерал, 8 полковник тата 18 офицер.

СЕКЕШФЕХЕРВАР хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшмантан сăртлă-вăрманлă ВЭРТЭШХЕДЬШЭГ районне тасатнă, НЕСМЕЙ, АГОСТИАН, ТАВАРОШ, ШАРДЕРЕСТЕШ ялĕсене туртса илнĕ. СЕКЕШФЕХЕРВАР хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ПОЛГАРДЬ хулипе чугун çул станцине тата ШАРКЕСИ, ШАРКЕСИ АЛЬШО, НАДАШДИЛИДАНИ, ЙЕНЕ, ЭРЖЕБЕТ, ШАНДОРКА ялĕсене туртса илнĕ. Ку районра декабрĕн 27-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 694 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Декабрĕн 27-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 49 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 22 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Чехословакире, Шахы хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем çаплах малалла талăнса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем нимĕçсене тусем çинчи вăйлă çирĕплетнĕ позицисенчен хăваласа кăларнă та, темиçе пĕчĕк юханшыв урлă каçса, 10 километр малалла кайнă. Çавăнти çапăçусенче гитлеровецсене пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăн 15 туппине тата минометсен 3 батарейине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Будапешт хули районĕнче пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă. Совет чаçĕсем, гитлеровецсен тĕреклетнĕ пункчĕсене штурмласа, çавăрса илнĕ унка хĕссе пыраççĕ. Дунай шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче нимĕçсене Будапешт хули районĕнчи 12 поселокран хăваласа кăларнă. Вăл шутра Пештсентлеринц поселокне йышăннă. Ку поселок Будапешт хулинчен 5 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ларать. Тăшман пысăк çухатусем тÿсет. Çапăçу пулса иртнĕ вырăнсенче гитлеровецсен темĕн чухлĕ вилли, çĕмĕрсе тăкнă хĕçпăшалĕ тата техники выртать.

Будапешт хулинчен çурçĕртерехре тăшманăн сăртлă-вăрманлă вырăнта çавăрса илнĕ чаçĕсем, хăйсен юлашки вăй-халĕпе çапăçса, хĕвеланăçнелле татса тухма хăтланаççĕ. Пĕр участокра нимĕç пехотин батальонĕ танксем пулăшнипе контратака тунă. Гитлеровецсене пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем, вăйлăн персе, çуррине ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн пехотинецсем атакăланă хыççăн тăшманăн икĕ роти, алăри хĕçпăшалне пăрахса, тыткăна парăннă.

Совет воинĕсем унти çапăçусенче çав тери паттăррăн тата пысăк мастерлăхпа кĕрешеççĕ. Гварди рядовой Хутай Калиев, танксене пемелли гранатăпа персе, нимĕçсен хăй тĕллĕн çÿрекен туппине сирпĕнтерсе янă тата тупă экипажне пĕтерсе тăкнă. Гварди сержанчĕ Матюм, танксене пемелли тупăпа персе, нимĕçсен икĕ танкне çĕмĕрсе тăкнă. Гварди старшинин Бессаровăн тупă расчечĕ нимĕçсен «Король тигрĕ» йышши йывăр танкне персе çĕмĕрнĕ. Дудик лейтенант ертсе пыракан кавалери эскадронĕ тăшман тылне кĕрсе кайнă та нимĕçсен автоколоннине тапăннă. Совет кавалерисчĕсем 40 гитлеровеца вĕлернĕ, 6 автомашина тытса илнĕ тата темиçе çынна тыткăна илнĕ. Политов пулеметчик тăшман контратакине сирсе янă чухне 15 нимĕçе вĕлернĕ. Гварди рядовойĕсем Томинпа Мудренко штаб машинине тытса илнĕ, машина çинчи нимĕç офицерне унăн алличе пулнă паха документсемпе пĕрле тыткăна илнĕ.

* * *

Секешфехервар хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Совет пехотинецĕсем тата танкистсемпе артиллеристсем, Дунай шывĕн кăнтăр хĕррипе наступлени туса пырса, хĕвеланăçнелле кайнă. Пĕр районра пирĕн танксем тăшман группировкине сасартăк атакăланă. Çакна кĕтмен гитлеровецсене аркатса тăкнă. Нимĕçсенчен 56 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен тупă (вĕсенчен 26-шĕ пĕтĕмĕшпех юсавлă), 35 хир туппи тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Тепĕр участокра совет чаçĕсем, çав тери хăвăрт малалла куçса пырса, тăшманăн Таварош ялĕнчи гарнизонне аркатса тăкнă, тăшманпа Тат хули хĕрринче çапăçма тытăннă; ку хула нимĕçсен вăйлă çирĕплетнĕ опорнăй пункчĕ пулса тăрать. Пĕр соединенин кавалерисчĕсем Вэртэжшхедьшэт ятлă вăрманлă тăва тăшмантан тасатнă чухне нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Чехословакире, Кошице хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, нимĕçсем, хăйсен уйччен çухатнă позицийĕсене каялла туртса илме хăтланса, темиçе хутчен те контратака тунă. Пирĕн чаçсем гитлеровецсен контратакисене пурне те сирсе янă. Андреев майор ертсе пыракан батальон боецĕсем çав çапăçура нимĕçсен 120 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 4 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Рядовой Михаил Наливайко, гусеницăсем айне граната сыххи пăрахса, нимĕçсен 2 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн карапĕсем Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен 10.000 тонна таякан судине шыва путарнă.

Республикăри малта пыракан ял Совечĕ

Ĕнер хаçатсенче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн «Республикăри малта пыракан ял Советне» ятлă куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Куславкка районĕнчи Аманик ял Советне парасси çинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Указне пичетленĕ.

1944 çулта çав ял Совечĕ хуçалăхпа культура строительствинче чылай пысăк çитĕнӳсем тунă.

Çав ял Совечĕн территорийĕнчи «Динамо» колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене пурне те вăхăтра туса ирттернĕ, тĕштырăсене кашни гектартан 15,9-шер центнер, çĕрулмине гектартан 180 центнер пухса илнĕ. Çав колхоз государствăна тĕштырăпа çĕрулми срокра парса татнă тата планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне, çавăн пекех тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 1.860 пăт тырă панă. «Динамо» колхозра тухăçлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана та пурнăçа кĕртнĕ.

Ялхуçалăхĕнче çавăн пек ăнăçлă ĕçленипе пĕрлех Аманик ял Совечĕ промышленноçпа транспорт валли те ĕç вăйĕ кирлĕ чухлĕ тата вăхăтра парса тăрать. Аманик ял Совечĕ 1944 çулхи финанс планне те ирттерсе тултарать.

Аманике пырса кĕрсен, чи малтан çакна куратăн: унта урамсем таса та йĕркеллĕ, ял лайăхланнă. Унта культурăллă пурнăçа кирлĕ пек хакласçĕ, культурăна колхозниксен йăлине кĕртессишĕн çине тăрса кĕрешеççĕ.

Аманик ялĕнчи пуçламĕш шкулшăн колхозлă ял тимлĕн тăрăшать. Шкул çуртĕ унге çутă, пысăк, ăна тăрăшса юсанă. Вутă хĕл каçма çитмелĕхех хатĕрлесе хунă. Пĕр сăмахпа каласан, унта лайăх ĕçлеме пур условисем те туса панă. Çул çитнĕ ачасем унта пурте шкула çӳреççĕ.

Аманик ялĕнче лайăх вулав çуртĕ тата 300 çын вырнаçмалăх колхоз клубĕ пур. Колхозра ача çуратмалли çурт тунă, трахома чирне сыватакан пункт ĕçлет. Ял Совечĕн территорийĕнчи ялсенче колхозниксен килĕсен 60 процентне радио кĕртнĕ.

Çав ялта çар сыннисен çемьисене пулăшас ĕçе те лайăх туса пыраççĕ. Фронтовиксен 62 çемьине тĕштырă парса пулăшнă. Тăлăх ачасемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене те материальнăй пулăшу параççĕ. Ял Совечĕн исполкомĕн председателĕ Русскин юлташ хăй те Отечественнăй вăрçă инвалидĕ, вăл хăйĕн ĕçне юратса тата тăрăшса туса пырать.

Аманик ял Совечĕ ялăн хуçалăхпа культура пурнăçне ялти актив çине таянса ĕçлесе ертсе пырать. Çав актив ялан ĕçлекен виçĕ комиссире пĕрлешнĕ: бюджет комиссийĕнче, ялхуçалăх комиссийĕнче тата шкул комиссийĕнче. Çак комиссисем ял Совечĕн исполкомĕн ларăвĕнче пăхса тухмалли чи кирлĕ ыйтусене хатĕрлесе хураççĕ. Вăл ыйтусене комиссисем хăйсен ларăвĕсенче тĕплĕн сӳтсе-явасçĕ, хăйсен решенийĕсенче конкретнăй кăтартусем пăраççĕ.

Аманик ял Совечĕ чи малти вырăна çĕмĕлах тухман, мĕншĕн тесен республикăри малта пыракан ял Совечĕ тенĕ хисеплĕ ята илессишĕн темиçе ял Совечĕ ăмăртса ĕçленĕ.

1945 çулта Аманик ял Совечĕн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хăйĕн аллинчех тытса тăрассишĕн, хуçалăхпа культура строительствинче çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн, фронта тата ытларах пулăшассишĕн кĕрешмелле.

Хĕрлĕ Çар валли хăюллă та чăтăмлă боецсем вĕрентсе хатĕрлер!

Çитес кунсенче всевобуч подразделенийĕсене çамрăксен çĕнĕ ушкăнĕсем пыраççĕ. Çак çĕнĕ вăя пирĕн тивĕçлипе кĕтсе илмелле. Всевобуч пункчĕсенче вăрçă ĕçне вĕренессине кирлĕ пек йĕркелеме пирĕн условисем çителĕклĕ. Занятисенче усă курмалли пособисене çителĕклех хатĕрленĕ, всевобуч подразделенийĕсене ертсе пыма хăйсен ĕçĕсене лайăх пĕлекен ăста командирсемпе политработниксем уйăрса панă.

Пирĕн республикăри нумай районсенчи всевобуч пункчĕсем çамрăксен çĕнĕ ушкăнĕсене кĕтсе илме тăрăшса хатĕрленеççĕ. Шупашкар, Улатăр, Канаш хулисенче, Хĕрлĕ Чутай тата Пăрачкав районĕсенче вĕренĕве ăнăçлăн пуçăнма пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. Ку хуласемпе районсенчи всевобуч пункчĕсенче ĕçлекен командирсемпе политработниксен методикăллă семинарĕсене ирттернĕ. Вĕренӳ пункчĕсен çурчĕсене юсанă, вутă çителĕклĕ хатĕрленĕ, йĕлтĕрсене, вĕренӳре кирлĕ япаласене юсанă.

Çав вăхăтрах Шупашкар тата Ишлей районĕсенчи всевобуч пункчĕсем çамрăксен çĕнĕ йышĕсене кĕтсе илме, вĕренĕве ăнăçлă пуçлама хатĕрленсе çитмен. Çак районсенче всевобуч подразделенийĕсенче ĕçлеме командирсемпе политработниксем те кирлĕ чухлĕ тупса паман. Вĕренӳ çурчĕсене юсаса ăшăтман, вутă хатĕрлес тата йĕлтĕрсемпе вĕренӳре кирлĕ хатĕрсене юсас тĕлĕшпе нимех те туман. Çакă ĕнтĕ ку районсенчи всевобуч органĕсемпе комсомол райкомĕсем çамрăксене вăрçă ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине пĕлтерет. Комсомол райкомĕсен всевобуч пункчĕсене юсаса йĕркене кĕртес тата вĕренӳре кирлĕ хатĕрсене юсас е çĕнĕрен туса хатĕрлес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлемелле.

Всевобуч боецĕсене вăрçă ĕçне лайăх пĕлекен, хăюллă та паттăр тата чăтăмлă воинсем пулма вĕрентесси пĕтĕмĕшпех командирсемпе политработниксенчен килет. Çавăнпа всевобуч пункчĕсенче ĕçлеме командирсемпе политработниксем уйăрса лартас ĕç çине уйрăмăнах тимлĕн пăхмалла.

Чи малтанах боеца пĕччен тата алă вăççĕн çапăçма лайăх вĕрентмелле. Ку тĕлĕшпе Отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи паха тĕслĕхсемпе анлăн усă курмалла. Занятисене программăра кăтартнă материалсене тĕплĕн вĕренсе, дисциплинăна çирĕп пăхăнса ирттермелле. Боеца сăмахпа каласа çеç вĕрентни çителĕксĕр. Командирăн боеца малтан каласа ăнлантармалла, унтан туса кăтартмалла. Боец ăнланмарĕ пулсан, тепĕр хут та туса кăтартмалла. Кашни боец программăри пур темăсем тăрăх та «отлично» вĕренсе пытăр.

Хурçă пек çирĕп дисциплина—кашни боецшăн закон пулса тăрать. Çавăнпа всевобуч боецĕсене вĕренӳ пункчĕсене пынă малтанхи кунран пуçласах çарти пек çирĕп дисциплинăна, йĕркеллĕ пулма, командир приказĕсене хăвăрт тата тĕплĕн пурнăça кĕртме вĕрентмелле.

Вĕренӳ пункчĕсенче боецсене йĕлтĕрпе лайăх çӳреме вĕрентессине малтанхи кунран пуçласах тимлĕн тытăнмалла. Ку майпа боецсене 20 сехетлĕ программăпа вĕрентмелле, походсемпе чупусем туса ирттермелле. Уйрăмăнах чăрмавлă вырăнсенче —сăрт-туллă, сырма-çатраллă тата вăрманлă вырăнсенче çӳреме вĕрентмелле. Тĕттĕм каçсенче ирттернĕ йĕлтĕрлĕ походсенче боецсене кирлĕ вырăна компаспа, йывăçсемпе, çăлтăрсемпе усă курса çитме вĕрентмелле. Йĕлтĕр çинчен пăшалпа пеме, граната ывăтма вĕрентмелле.

Всевобуч пункчĕсенче вĕренекен боецсен пурин те ГТО значокĕн хĕллехи нормисене памалла. Осоавиахим тата РОКК организацисен боецсене 130 сехетлĕ программăпа вĕрентсе ПВХО тата ГСО значокĕсен нормисене партармалла.

Вăрçă ĕçне лайăх вĕрентесси боецсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх туса пынинчен килет. Çавăнпа всевобуч пункчĕсенче политикăллă тата культурăллă-массăллă ĕçе кирлĕ пек туса пырасси—комсомол райкомĕсемпе хула комитечĕсен пысăк ĕçĕ. Çак ĕçе кирлĕ пек туса пырса, чи лайăх боецсене Ленинла-Сталинла комсомол ретне хутшăнтармалла.

Фашистла нимĕç захватчикĕсене пĕтĕмĕшпех çапса аркатса çĕнтерӳ тăвасси инçе юлмарĕ. Çак çĕнтерӳĕн сехетне сывхартассишĕн пĕтĕм совет халăхĕ ырми-канми ĕçлет. Ирсĕр тăшмана хирĕç паттăр çапăçакан Хĕрлĕ Çар валли вăрçă ĕçне лайăх пĕлекен, хăюллă та чăтăмлă боецсем хатĕрлер!

Г. ПЕТРУХИН,
ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Финанс работникĕсем хăйсем те парăмлă

Укçа-тенкĕ пухмалли 1944 çулхи плана тултарас ĕç Элĕк районĕнче çаплах çителĕксĕр пырать-ха. Районра ялхуçалăх налогне 300 пин тенкĕ, заем укçине 1.200 пин тенкĕ пухса çитермен. Уйрăмах укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин укçине пухас ĕç начар пырать. Лотерея билечĕсемшĕн 600 пин тенкĕ укçа пухса çитермен.

Финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăх пуçлансан, ялсоветсемпе колхозсене кайма уполномоченнăйсем уйăрнă. Анчах вăл уполномоченнăйсенчен нумайăшĕсем хăйсем çумне çирĕплетсе панă ялсоветсене кайман. Ехремкасси ялсоветне кайма районри апат-çимĕç комбиначĕн директорне Семенов юлташа уйăрнă. Вăл Ехремкасси ялсоветĕнче укçа-тенкĕ пухас ĕçе пачах хутшăнмасть. Семеновăн хуçалăхĕ ку ялсоветĕнчех, анчах вăл хăй те государство умĕнчи парăмсене 1900 тенкĕ ытла тӳлесе татман. Çав вăхăтрах районри апат-çимĕç комбиначĕ енĕпе те финанс планне тултарасси çителĕксĕр пырать. Районри финанс пайĕнче ĕçлекен юлташсем хушшинче те государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене парса татма васкамани сисĕнет. Районри финанс отделĕн бухгалтерĕ Михайлова юлташ тĕрлĕ парăмсене 600 тенкĕ ытла парса татман. Çакăн пек тĕслĕхсем ялсоветсемпе колхоз руководителĕсем хушшинче те тĕл пулаççĕ. Изванка ялсоветне кĕрекен Уйкас колхозĕн председателĕ Д. Андреев юлташ государство умĕнчи тĕрлĕ парăмсене 3000 тенкĕ ытла парса татман.

Районри хăшпĕр колхозсенче укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсене хăш колхозник мĕн чухлĕ илнине те пĕлмеççĕ. Çавна пула районри 24 колхозра билет укçине пухма тытăнман.

Укçа-тенкĕ пухас ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса лармалла юрамасть. Финанс планне тултарас ĕçе партипе совет активне, финанс работникĕсене, ялсовечĕсемпе колхоз председателĕсене хутшăнтарса, 1944 çулхи финанс планне çак кунсенчех тултарса çитермелле.

А. МИХАЙЛОВ.

МОПР организацин районри конференцийĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Çак кунсенче ВКП(б) райкомĕн парткабинетĕнче МОПР организацин районри конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференци МОПР организацин районри комитечĕн председателĕн К. Вишневский юлташăн отчетлă докладне итлерĕ.

Отчетлă тапхăрта МОПР организацийĕсем хăйсен ĕçĕсене чылаях аванлатрĕç. Малтанхи вăхăтра МОПР ячейкисем районра пурĕ те 15 колхозра кăна пулнă пулсан, халĕ районра 66 организаци. Вăл организацисенче 2408 член тăрать. Уйрăмăнах НКВД районри отделенийĕнчи МОПР оргнизацийĕ (председателĕ А. Полников юлташ) лайăх ĕçлесе пырать. Унта ĕçлекенсене пурне те МОПР организацине явăçтарнă. Вĕсем кашниех МОПР ĕçне активлăн хутшăнаççĕ. Энтри-Пасарĕнчи, Октябрьскинчи тата Анатри Карапашри МОПР организацийĕсем Хĕрлĕ Çар валли вăрçă техники тума укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе лайăх ĕçлерĕç. МОПР комитечĕн членĕсем В. Федоров, С. Казанов, Н. Петров юлташсем комитет шанса панă ĕçсене вăхăтра та лайăх пурнăçласа пыраççĕ. Колхозсенче МОПР организацисен пухăвĕсенче докладсемпе калаçусем ирттерсççĕ.

МОПР организацин районри комитечĕ укçа-тенкĕ пухас плана ытлашшипех тултарса пырать. 1943 çулта 13.577 тенкĕ пухса çулталăкри плана 1015 процент тултарнă. 1944 çулта 33.632 тенкĕ пухса укçа-тенкĕ пухмалли плана 1086,3 процент тултарчĕ. Çапла вара МОПР организацин районри комитечĕ республикăри куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Анчах МОПР райкомĕн ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Районри чылай колхозсенче МОПР организацийĕсем çук. Хăшпĕр шкулсенче МОПР ĕçне кирлĕ пек хакламаççĕ. Çавна пула Аксарино, Пукаш тата Чураш шкулĕсенчи организацисем 7—8 уйăх хушши пухусем туса ирттермен, член укçисене пухман. Емпӳртри, Çĕньялти тата Итнескерти организацисем колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ, МОПР организацине çĕнĕ членсем явăçтарас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

Доклад хыççăн прение 4 делегат тухса калаçрĕç. Вĕсем МОПР организацин районри комитечĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене тĕплĕн палăртрĕç. Конференци МОПР райкомĕн отчетлă тапхăрти ĕçĕсем тăрăх тата МОПР организацисем умĕнче тăракан задачăсене палăртса, решени йышăнса хăварчĕ.

Конференци МОПР райкомĕн пленумне тата ревизи комиссин составне суйласа хăварчĕ.

Ник. АНДРЕЕВ.

Фронтовиксен ачисене пулăшаççĕ

ЕЛЧĔК. Тăрмăш ялсоветне кĕрекен «Новый путь» тата «Красное знамя» колхозсенче фронтовиксен ачисене пулăшас ĕç аван пырать. Ку ыйтăва колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-явнă, кама мĕнле пулăшу памаллине шута илнĕ. «Новый путь» колхозра фронтовиксен ачисене пулăшма 6 çĕлĕк, 13 мăшăр çăм чăлха, аялтан тăхăнмалли 6 мăшăр кĕпе тата урана тăхăнмаллисем 22 мăшăр пухса хатĕрленĕ. Унсăр пуçне, всеобуч фондне 9 центнер тырă уйăрса панă. «Красное знамя» колхозра 13 ачана ăшă кĕпе-тумтирсем парса пулăшнă. Шкул ачисене вĕри апат çитерес ĕçре те колхозсем кирлĕ продуктсене парса пулăшаççĕ. Халĕ шкулта 76 ача валли столовăй уçнă.

Н. АЛЕКСЕЕВ.

Перемири çинчен тунă килĕшĕве Румыни пурнăçа кĕртсе пыни çинчен

БУХАРЕСТ, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Аяларахра эпир перемири çинчен тунă килĕшĕве çак çулхи ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче Румыни мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен пичетлетпĕр.

Килĕшĕвĕн 2-мĕш статьине (Германипе Венгрин офицерĕсене, салтакĕсене тата гражданĕсене куçса çӳреме памасăр тытса тăрасси çинчен калаканнине) Румыни правительстви, пĕтĕмĕшпе илсен, пурнăçланă темелле. Румынин çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрь пуçламăшĕ тĕлне Румынире 10 пин нимĕçпе венгера ахăн тытса чарнă. Анчах ку таранччен те совет çар влаçĕсем Румынин тĕрлĕ вырăнĕсенче пытанса пурăнакан гитлеровецсене тупаççĕ. Вĕсенчен нумайĕшне шпионла е диверсиллĕ заданисем парса хăварнă пулнă.

Килĕшĕвĕн 5-мĕш статьи те (вăйпа хăваласа кайнă совет гражданĕсене каялла тавăрасси çинчен калакании) çавăн пекех вăçленсе пырать. Декабрĕн 13-мĕшĕ тĕлне Союзниксен Контроль Комиссийĕ пĕтĕм Румынипе совет гражданĕсем 55 пин çын пуррине палăртнă. Вăл шутран 36 пин çынна Совет Союзне ăсатнă та ĕнтĕ, ыттисем çывăхри кунсенчех тухса каймалла.

Нимĕçсем Румынире хăварнă трофейсене палăртас тĕлĕшпе Союзниксен Контрольнăй Комиссийĕ пысăк ĕç туса ирттерет. Анчах та çак ĕçе Румынири уйрăм çынсемпе учрежденисем чăрмантарса пынă. Вĕсем çав япаласене «Румыни» япалисем тесе пытарса хума хăтланнă. Союзниксен Контроль Комиссийĕн сотрудникĕсем çапла хăтланнисене тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе ăнăçлăн ĕçлеççĕ. Кашни кунах трофей япалисем тиенĕ пароходсем тата поездсем Совет Союзне кайса тăраççĕ. Союзниксен Контроль Комиссийĕ темиçе пин вагон япала, тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе çар материалĕсем тата темиçе çĕр нимĕç самолечĕ пуррине палăртнă. Дунай шывĕ çинчи Джуржу, Турну-Северин, Калафат тата ытти портсенче те тăшман суднисене нумай палăртнă. Çак япаласене майĕпен Совет Союзне ярса тăраççĕ.

Румыни оккупанчĕсем Украинăпа Молдавире çаратнă совет япалисене каялла тавăрса килесси ăнăçлăн пырать. Ноябрĕн 21-мĕшĕ тĕлне Констанцăра совет япалисене тиенĕ 684 вагона пушатнă тата 196 вагон пушатассине кĕтсе тăраççĕ. Нумай пурлăха Совет Союзне илсе çитернĕ те ĕнтĕ.

Сăмахран, декабрĕн 12-мĕшĕнче Балш станцийĕнчен СССР-а 9 вагон хурт вĕлли ăсатнă (вĕсене румынсем хăй вăхăтĕнче Украинăран илсе кайнă пулнă), Арад-фабрика станцийĕнчен электропатронсем, 4 вагон тĕрлĕ производство оборудованийĕ, 6 вагон Одессăри çип арлакан фабрикăн оборудованийĕ, 16 вагон чугун çул мастерскойĕн оборудованийĕ, 14 вагон тĕрлĕ механизмсем ăсатнă. Декабрь уйăхĕнче Румыни влаçĕсем 1.090 ĕнепе вăкăр, 1.053 сурăх, 359 лаша СССР-а тавăрса панă. Румыни правительстви нумаях пулмасть Совет Союзĕнчен çаратса килнĕ ĕнесене каялла тавăрса парасси çинчен распоряжени пичетлесе кăларнă. Вăл распоряженире çапла каланă: çавăн йышши ĕнесем вилнĕ пулсан е вĕсене пуснă пулсан, вĕсемпе усă курнă çынсем ĕнесене сутăн илмелле те Союзниксен Контроль Комиссийĕ аллине памалла. Совет Союзĕнчен çаратса кайнă япаласене палăртса каялла тавăрас ĕç малалла пырать.

IV-мĕш кварталта (декабрĕн 21-мĕшне çитиччен) Румынирен Совет Союзне 386 пин тонна нефтепродуктсем ăсатнă.

Çавах та килĕшĕвĕн хăшпĕр статьисене пурнăçласси япăх пырать-ха. Ку ĕнтĕ, сăмахран, 8-мĕш статья пирки палăрать. Вăл статьяра Германипе Венгрин япалисем çинчен тата çав государствăсен Румыни территорийĕнче юлнă япалисем çинчен каланă. Германипе Венгри капиталĕ пуç пулса тăракан предприятисем Румынире нумай. Перемири çинчен килĕшӳ тунă хыççăн Румыни правительстви çав предприятисене уйрăм администраторсем уйăрса лартнă пулнă. Анчах правительство енчен çирĕп контроль пулман пирки, вăл администраторсенчен хăшпĕрисем хăйсем пуяссишĕн кăна тăрăшнă. Çавăн пек çынсем хăйсене мĕн чухлĕ кирлĕ, çавăн чухлĕ шалу хунă, чĕртавара салатса пĕтернĕ тата çав предприятисен капиталĕ ютçĕршывсене кайнине е уйрăм çынсен кăсйисене куçнине хупласа пынă. Çав фактсене нумаях пулмасть частнăй служащисен профсоюзĕ çырнă çырура тăрă шыв çине кăларнă. Вăл çырăва «Ромыниа либера» ятлă хаçатра пичетлесе кăларнă. Профсоюз çав администраторсен ĕçне контроль тума тата закона хирĕçле ĕçсем тунă çынсене ĕçрен кăларма ыйтнă. Анчах та халăх хуçалăхĕн министрĕ Леукуциа çакна хирĕç пулнă, администрацие хӳтĕлес çул çине тăнă.

Государство аппаратне тасатас ĕç те лайăхах пымасть. Шалти ĕçсен министерстви хаçатра пичетлесе кăларнă циркулярта çакă паллă пулнă: шалти ĕçсен министерствинче ĕçлекен ответлă работниксем чылайĕшĕ взяткăсем илсе тăнă тата легионерсене ирĕкре хăварнă.

Румыни хаçачĕсенче çакăн çинчен те çыраççĕ: государство аппаратĕнчи паллă вырăнсенче хăшпĕринче халĕ те çар преступникĕсем лараççĕ. Сăмахран, Румыни пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, перемири килĕшĕвне пурнăçа кĕртнĕ чухне тухакан тăкаксене пăхма уйăрнă уполномоченнăй Джурджувяну румынсем Бессарабие виçĕ çул хушши оккупацилесе тăнă вăхăтра унта румынизаци департаменчĕн директорĕ пулса ĕçленĕ. Вăл Бессарабире еврейсене хĕсĕрленишĕн ответ тытмалла.

Радиовещани обществин пуçĕнче ку таранччен Василиу Ионеску тăнă пирки хаçатсем тарăхаççĕ. Антонеску диктатури вăхăтĕнче те çав Ионеску текенскер асăннă ĕçрех пулнă. Фашистла пропаганда ĕçне вăйлă туса пынă.

Декабрĕн 13-мĕшĕнче Трансильвани патриочĕсен «Ардяул» ятлă органĕ тасату комиссийĕсем хăйсем те час-часах таса мар пулни çинчен кăтартса панă. Сăмахран, Румынипе Германи обществин генеральнăй секретарĕн сотрудникĕ пулса ĕçленĕ тата Бухарестра совета хирĕçле выставкăсем туса ирттернĕ Полидор ятлă çын ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче ку таранччченех тасату комиссийĕн членĕ пулса тăрать. Румынин государство аппаратне фашистла тата шанчăксăр çынсенчен тасатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тумалла пулать-ха.

АФИНЫ ХУЛИНЧИ ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ ЧЕРЧИЛЛЬ КАЛАНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Афины хулинчи специальнăй корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 27-мĕшĕнче Афины хулинче пулса иртнĕ пресс-конференцире Уинстон Черчилль премьер-министр Афины хулинчи конференци решени йышăнасси пирки вăл хăй шанса тăни çинчен каланă. «Çак ĕçе хутшăннисене,—тенĕ Черчилль,—эпир хамăр çине пысăк ответлăх илтĕмĕр. Пăлхавçăсене эпир хула центрĕнчен хăваласа кăлартăмăр. Афины хулинче тата ун таврари Аттика çĕрĕ çинче чăн-чăн хуçа пулса тăма пирĕн кунта та тата кунта килекен çулсем çинче те çар çителĕклĕ таран пур. Хирĕçле енĕн представителĕсем мĕн чухлĕ хăвăртрах ăса кĕрĕç, кĕрешӳ те çавăн чухлĕ хăвăрт пĕтсе ларĕ. Анчах та хĕçпăшалпа тата вирлĕрех усă курнине пула килĕшсе татăлмасăр кĕрешӳ чарăнас çук».

Черчилль каланă тăрăх, пĕтĕм халăх ирĕклĕн сасăласа хăйĕн ирĕкне кăтартса париччен король Греције тавăрăнасси çинчен калаçу та пулма пултараймасть.

ЧЕРЧИЛЛЬПЕ ИДЕН АФИНЫ ХУЛИНЧЕН ЛОНДОНА ТУХСА КАЙНА

ЛОНДОН, декабрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио Афины хулинчи хăйĕн корреспонденчĕ пĕлтернине панă. Корреспондент каланă тăрăх, Черчилльпе Иден Лондона тухса кайнă. Греци корольне вĕсем регентство тума халех килĕшме сĕнме шутлаççĕ.

ДАМАСКИНОС АРХИЕПИСКОП АФИНЫ ХУЛИНЧИ КОНФЕРЕНЦИН ЛАРĂВĔСЕНЕ ТЕПĔР СРОКА ХĂВАРНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин специальнăй корреспонденчĕ Афины хулинчен çапла пĕлтерет: Афины хулинче авторитетлă çынсем каланă тăрăх, Дамаскинос архиепископ конференци ларăвĕсене тепĕр срока хăварнă. Конференцин малашнехи ларăвĕсене «хăçан та хăçан пухма кирлĕ пулать, çавăн чухне тин пухăп», тенĕ.

Колхозри конюхсене пулăшас майпа

Тихасене лайăх пăхса çитĕнтерессишĕн

Колхозсенчи лашасен шутне ӳстересси тихасене лайăх пăхса çитĕнтернинчен килет. Колхоз конюхĕсем вара çак ответлă тата пысăк ыйтăва татса паракансем пулса тăраççĕ.

Лайăх йышăнса илнĕ тата юратса пăхса çитĕнтернĕ тиха тĕрлĕ чир-чĕре парăнмасть. Анчах та тихашăн тăрăшасси кĕсре хăмличчен нумай малтан пуçланать. Пĕтĕ кĕсресене лайăх пăхни, вĕсемпе ĕçре тĕрĕс усă курни—лайăх тиха пулассине шантарса тăрать. Кĕсре хăçан хăмлассине конюхсем тĕплĕн пĕлсе тăмалла. Пĕтĕ кĕсресене пăхас ĕçе лашасене ытларах юратакан, вĕсемшĕн тăрăшакан конюхсене уйăрмалла. Пĕтĕ кĕсресем валли лайăх утă-улăм хатĕрлес пулать. Кăвакарнă е çĕрме тытăннă апат пама пачах юрамасть, вăл кĕсресене хăм пăрахтаракан сăлтавсенчен пĕри пулса тăрать. Кĕсресене çитерме лайăх пахалăхлă тырă уйăрса хумалла, кашни кун 4 хутран кая мар тата пĕр вăхăтра апатлантармалла. Вĕсен апачĕ шутĕнче тĕштырă, шултăра тата сĕткенлĕ апат та пулмалла. Çав вăхăтрах витаминлă тата минераллă апатсем те памалла. Шăтарнă тырă витаминлă паха апат пулса тăрать. Тырра шăтнă хыççăн 4—5 кунтан çитермелле. Урпана е сĕлле вут пуççинчен лайăх тасатса шăтарас пулать. Анчах та сăвăслă тырă сиенлĕ, çавăнпа та ăна кĕсресене шăтарса та, ахаль те çитермелле мар. Шăтарнă тырра пĕтĕ кĕсрене кунне 500—600 грамм çитермелле, вăл вара кĕсрен ăшчикне çирĕплетет тата тĕрлĕ чиртен те сыхлать.

6 уйăхран пуçласа 9 уйăха çитиччен кĕсресемпе çăмăл ĕçре çеç усă курма юрать. Юлашки ик уйăхра тата хăмланă хыççăн 15 кун хушши кĕсресене пур тĕрлĕ ĕçрен те хăтармалла. Вĕсене кашни кунах уçăлтарма илсе тухмалла. Уçăлтарма кăларсан, вĕсене тикĕс вырăнта, ытти лашасемпе выльăхсем пулман çĕрте илсе çӳремелле. Кĕсре талăкра 3—4 сехетрен кая мар ирĕк те уçă сывлăшра пулмалла, ун патĕнчен конюх ниçта та каймалла мар, çавăтса çӳресен тата та лайăхрах пулать.

Пĕтĕ кĕсрене çакăн пек пăхсан кăна хăм пăрахассине пĕтерме тата лайăх тиха илме пулать. Кĕсресене лайăх тата тĕрĕс пухса апатлантарсан, вĕсен сĕчĕ те ытларах пулать.

Хăмланă хыççăн кĕсресене ăшă вырăнта тата яланах тасатса тăмалла. Тиха малтанхи уйăхсенче талăкра 20—30 хут ĕмет. Çавă вăл тиха ĕмĕртекен кĕсрене аякри çула яма юраманни çинчен калать. Тихаллă кĕсрене пĕр сехет ĕçленĕ хыççăн кавтармалла тата тихине ĕмĕртмелле. Тиха ĕмĕртекен кĕсрепе хытă çӳреме пачах юрамасть. Сĕт сахал паракан кĕсре тихине нумай паракан кĕсререн вăхăтлăха ĕмĕртме юрать, анчах та çакна сыхланса тумалла тата зоотехникпа е ветеринарпа канашламалла.

Тихана çамрăкранах алла вĕрентмелле, ăна хăратма юрамасть. Мĕншĕн тесен тихана çамрăк чухне хăратсан, ăна алла вĕрентме йывăр пулать. Малтанхи кунранах тихана ачашласа усрамалла, тасатмалла, урисене тыткаланă чухне те лăпкă тăма вĕрентес пулать. Ун пек тиха ӳссе çитсен те çынран ютшăнмасть, ăна вара кӳлсе çӳреме те тата ĕçе вĕрентме те çăмăлтарах пулать.

Çуралнă хыççăн икĕ уйăх иртсен, тихана амĕш сĕтне çинĕ чухлех ытти апат çиме хăнăхтарса пымалла. Ура айĕнчи апат—курăк пулмасан, тихасене ватнă сĕлĕ е çăнăх ирĕшне (сăсăлне) парса апата вĕрентме лайăх. Ватнă сĕлĕ е урпа, çавăн пекех ирĕш—çăмăл тата тутă апат, çавăнпа та ăна тихасем часах çиме вĕренеççĕ. Малтанлăха çакăн пек апата 100—200 грамм яхăн парса çитермелле, унтан вара вăл нормăна ӳстерсех пымалла. Анчах та тихасене амĕш сĕтĕнчен 6 уйăхран малтан уйăрма юрамасть. Çак срокран маларах уйăрнă тихасем ӳсме чаранаççĕ тата имшерккеленеççĕ, вĕсене тĕрлĕ чирсем те хăвăртрах ерме пултараççĕ. Тихана амĕш сĕтĕнчен уйăриччен сĕлĕ, урпа тата ытти çавăн пек тутă та вăйлă апатсем çиме вĕрентмелле. Тихана апат çиме амăшĕ çук чухне вĕрентмелле. Амăшĕпе пĕрле усăлма тикĕс вырăна кăлармалла. Çамрăк курăклă улăхсенче амăшĕпе пĕрле çӳретсен лайăх, анчах та конюхсем яланах асăрхаса тăмалла.

Тиха ӳссе çитĕнмĕ май сĕлĕ çиме вĕреннĕ хыççăн, утă-улăм çиме те вĕрентмелле. Тихана амăшĕнчен уйăрсан, ушкăнпа çӳреме хăнăхтармалла.

Лайăх пăхса çитĕнтернĕ тихана колхозри конюхсем кăна мар, колхозниксем те савăнаççĕ. Тихасем çитĕнтернипе çеç эпир колхозри лашасен йышне ӳстерсе пыма пултаратпăр. Çӳлте асăннă йĕркесене пăхăнсан çеç Хĕрлĕ Çар валли тата хамăр хуçалăхра усă курма чăтăмлă та вăйлă лашасем çитĕнтерме пултаратпăр.

Н. ВАСИЛЬЕВ.
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Ветеринари управленийĕн главнăй врачĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Голландире союзниксен çарĕсем тăшмана хирĕç Маас шывĕ тăрăх Тильбургран тата Венлоран çурçĕртерехре вăйлă кĕрешнĕ. Грамменильпе Манэре хаяр çапăçусем пыраççĕ. Союзниксем Льернарен икĕ миля çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата Юмен сывăхĕнче (Бельги) нимĕçсен вăйлă атакисене сире-сире пăрахнă. Тăшманăн Рошфор енчен Селль еннелле куçса пыракан бронетанковăй чаçĕсем пысăк çухатусем тӳснĕ.

Союзниксен кăнтăр енчен наступлени туса пыракан чаçĕсем Бастонь хулине хӳтĕлекен чаçсемпе пĕрлешнĕ. Бастонь сывăхĕнче хупăрласа илнĕ союзниксен çарĕсем тăшмана пысăк çухатусем кӳнĕ. Бастоньрен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра союзниксем Инзенборн хулине (Люксембург) тăшмантан тасатнă та виçĕ тĕлте Сюр шывĕ урлă каçнă. Хаяр çапăçу хыççăн Эшдорфа тăшмантан тасатнă. Рингель сывăхĕнче тăшман пехоти тунă вăйлă контратакăна сирсе янă. Эхтернахран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Бофора хупăрласа илнĕ тата тăшмана Бердорфран хăваласа кăлараççĕ.

Союзниксен авиацийĕн пысăк соединенийĕсем çĕр çинчи çарсене хастарлăн пулăшса тăшман объекчĕсене тапăннă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 90 самолетне пĕтерсе тăкнă.

ЛОНДОН, декабрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕн пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Италире Серкьо улăхĕнче, тăшман çаплах атакăсем туса пынипе, союзниксен малти чаçĕсем татах пăртак каялла чакнă. Фронтăн ытти участокĕсенче патрульсем çапăçнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Австрири, Югославири тата Çурçĕр Италири çар объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: ĕнер кăнтăрла иртсен Англи самолечĕсем Германири Рейдт чугун çул узелне, сортировка станцийĕсене тата ытти чугун çул узелĕсене пырса тапăннă.

Тепĕр соединени, пин ытла самолет, Хĕвеланăç Германири чугун çул кĕперĕсене, (Дюссельдорфран 15 миля хĕвеланăçнерехре) йышлăн пырса тапăннă.

БЕЛЬГИРИ ТĂШМАНА ХИРĔÇ ТĂРАКАН ОРГАНИЗАЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВĂНА ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Брюссельрен пĕлтернĕ тăрăх, Бельгири тăшмана хирĕç тăракан тĕп ушкăнсен пуçлăхĕсем Германи наступлени туса кĕрсе кайма пултаракан районсенчен декабрĕн 27-мĕшĕнче Брюсселе пырса çитнĕ. Вĕсем хăйсене халь пыракан çапăçусене хутшăнтарма ӳкĕтлесех ыйтнă. Çак сĕнĕве правительство йышăнман.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ ЛЕЙТЕ УТРАВНЕ ПĔТĔМĔШПЕХ ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Филиппин утравĕсен шутĕнче тăракан Лейте утравĕ çинче вăрçă ĕçĕсем пĕтнĕ. Çав утрав çинче пулса иртнĕ çапăçусенче Америка çарĕсен 11.217 çын пĕтнĕ, Япони çарĕсен 113.221 çын пĕтнĕ. Америка çарĕсем Лейте утравĕ çине аннă кунран, кăçалхи октябрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа, Японин 2.748 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинчех Филиппин утравĕсем таврашĕнче японецсен 41 транспортне тата 2[illegible] карапне шыва путарнă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ТОКИО ХУЛИНЕ ТАПĂННИ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). США-н çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, паян кăнтăрла Сайпан утравĕ çинчи (Мариан утравĕсем) американецсен «Вĕçекен крепость» йышши вăйлăран та вăйлă бомбардировщикĕсем Токио районĕнчи промышленность объекчĕсене тапăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

декабрĕн 30-мĕшĕнче

КАНТАРЛА

ачасен сеансĕсене ирттерет.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16 сехетре.

КАÇХИНЕ

акăлчансен саслă, илемлĕ

«ЛЕДИ ГАМИЛЬТОН»

ятлă фильмне кăтартаççĕ.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 18, 20, 22 сехетре.

Декабрĕн 31-мĕшĕнче

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТРТА

бал-маскарад

тата

пысăк концерт

пулать.

Хăйне майлă оригиналлă костюмсемшĕн тата лайăх ташланăшăн призсем параççĕ.

Концерт залĕнче тата фойере илемлĕтсе пĕтернĕ Çĕн çул ёлки тавра массăллă вăйĕсем тата ташă пулать. Джаз-оркестр тата баян-купăс калаççĕ.

1944 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнче çĕрле 23 сехетре пуçланать те 1945 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче ирхине 5 сехетре пĕтет.

Шупашкарти электромеханически техникумра техникум курсĕшĕн экстернат йĕркипе экзамен пама ыйтса çырнă заявленисене йышăнаççĕ.

Заявленисене вăтам шкулта çичĕ çултан кая мар вĕреннĕ тата производствăра икĕ çултан кая мар ĕçленĕ çынсенчен пурин те йышăнаççĕ. Заявленисене çулталăк тăршшĕпех йышăнаççĕ.

Адрес: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 82.

Б—2

Шупашкарти кинотеатра паровой [illegible] ленире ĕçлеме кочегарсем халех [illegible] Ĕç укçи килĕшсе татăлнă тăрăх.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 04293 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 в. д. Тираж 16.000 экз.